Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

35 (8199) № * Юн кун, 2014 çулхи çу (май) уйăхĕн 14-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Ĕçлĕ çул çӳрев

## "Майсем çителĕклĕ, тăрăшмалла"



Ĕнер, майăн 13-мĕшĕнче, Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов Муркаш районне килсе кайрĕç. Чи малтанах ĕçлĕ делегаци Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх уй-хирĕнче чарăнчĕ. Асăннă хуçалăх ертӳçи Виталий Семенов кунти ĕç-хĕлпе паллаштарчĕ.

– Ку хирте эпир халĕ "владимирски" сортлă урпа акатпăр. Ака ĕçне пуçличчен çум курăкĕпе кĕрешетпĕр, агротехника мелĕпе усă куратпăр. Юлашки çулсенче çĕр пахалăхĕ те, тыр-пул тухăçĕ те ӳсни самай палăрать. Сĕт хакĕ пĕчĕк пулманран, выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлеме май килнĕрен ĕне йышне ӳстерме палăртатпăр. Хуçалăхра ĕçлес текенсем сахалтарах-ха, – терĕ Виталий Иосифович кунти ĕç-хĕл пирки.

Асăннă хуçалăх пĕр вăхăт самай уксахлама пуçланăччĕ, халĕ кунти ĕç-хĕл ырă енне улшăнни сисĕнет. Кирек епле ĕçе те вăхăтра тата çĕнĕ технологипе анлăрах усă курса пурнăçлама тăрăшаççĕ.

– Ĕçлекенсен условийĕсене лайăхлатма, çапла майпа хăвăр пата ытларах çынна илĕртме тăрăшмалла. Сирĕн ĕç кăтартăвĕ лайăхланни савăнтарать. Выльăх шутне ӳстермелле, унпа тĕллевлĕ ĕçлени чĕрĕ укçа тума май парать, çавăн пекех çĕнĕ технологипе усă курассине те яланах тĕпре тытмалла. Хуçалăх аталанăвĕ вара чи малтан ăна ертсе пыраканран килет. Майсем çителĕклĕ, тăрăшмалла, – терĕ Михаил Васильевич малалла ытларах та тимлеме хавхалантарса.

– Районти хуçалăхсем ака ĕçне вĕçлесе пыраççĕ. 11 пин те 189 гектар çинче ака ĕçĕ ирттерме палăртнă пулсан, паянхи кун 10 пин гектар ытла лаптăк çинче акнă. 482 гектар çинче çĕр улми лартма планланă, 62-шĕ çинче лартнă. Икĕ хуçалăхра горчица акнă. Куккурус тата суданка курăкĕ акас ĕçсем те малалла пыраççĕ, – районти ĕç-хĕлпе паллаштарать район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев.

Республика Пуçлăхĕ Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхри ĕç-хĕлпе те кăсăкланчĕ.

– Выльăх-чĕрлĕх усрани хуçалăх экономикине ӳстерме май парать. Паянхи кун 400 килограмм таякан вăкăрăн килограмм чĕрĕ виçишĕн 100 тенкĕ тӳлеççĕ. Çакă хăйхаклăха саплаштарать. Çавăн пекех патшалăх пулăшăвĕ те питĕ вырăнлă, – каласа парать асăннă хуçалăх ертӳçи Игорь Николаев.

Ĕçлĕ çул çӳрев Турай ял тăрăхнелле пулчĕ. Республика пĕлтерĕшлĕ Муркаш – Турай – Сăр автоçул çинче юсав ĕçĕ пыратчĕ. Çавна май республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев кунти ĕçпе кăсăкланчĕ. Ĕçсем епле пынипе "Чувашавтодор" организацийĕн генеральнăй директорăн çумĕ Виктор Разумов паллаштарчĕ.

– Материал çителĕклĕ. Пуçăннă ĕçе вăраха ямасăр пахалăхлă вĕçлеме шантаратпăр, – терĕ вăл.

Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра хĕрӳ ĕç тапхăрĕ пырать. Хирте 3 агрегат çĕр хатĕрлет. Хыççăнах тепĕр 3 агрегат акса пырать. Вĕсем хыççăн тепĕр агрегат çĕре çийĕнчех пусăрăнтарать. Ку хуçалăхра та çум курăкĕпе агротехника мелĕпе кĕрешеççĕ, çĕр пулăхне биологи майĕпе ӳстереççĕ. Акана хутшăнакан механизатор пĕр кунта икĕ пин тенкĕ çурă ĕçлесе илет, сеялка çинче тимлекенсем – икĕ пин тенкĕне яхăн. Хуçалăх ферминче хальхи вăхăтра икçĕр пуç ытла ĕне. Малашне вĕсен йышне 400 пуçа çитерме палăртнă. Паянхи кун пĕр ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм 19,1 килогрампа танлашать.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев икĕ хуçалăхра та ĕçсене аван йĕркеленине палăртрĕ, малашне те ăнăçу сунчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Виталий Семенов ертӳçĕ хуçалăхри çурхи ĕçсемпе республика Пуçлăхне Михаил Игнатьева, район пуçлăхне Игорь Николаева тата район администрацийĕн пуçлăхне Ростислав Тимофеева паллаштарать.**

Ыран – Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ

### ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМСЕМ!

Сире Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Çемье – ăс-хакăлпа кăмăл-сипет пуянлăхĕ, наци культурин, пурнăçăн çирĕпленнĕ йăлисен, çĕнĕ ăрусем аслисен ĕçне малалла тăсмалли йĕрке управçи. Юрату тата пĕр-пĕрне хисеплесси çинче никĕсленнĕ çирĕп çемье – обществăри тăнăçлăхпа аталану, Чăваш Енпе Раççейĕн ырă пуласлăхĕн никĕсĕ.

Мĕн пур çемье тата пĕтĕм этемлĕх хаклăхĕсене çирĕплетесси, ачаллă çемьесене пур енлĕн пулăшасси патшалăх политикинче тĕп вырăнта. Ача амăшĕпе ачалăха сыхламалли программăсем, нумай ачаллă çемьесене тĕревлемелли хушма мерăсем йышăннă. Федерацин тата республикăн амăшĕн капиталĕсене, виççĕмĕш ачашăн паракан пособи тӳлетпĕр, нумай ачаллă çемьесене тӳлевсĕр çĕр лаптăкĕсем уйăрса паратпăр, социаллă пулăшăвăн ытти мерипе усă куратпăр.

Пĕлтĕр 3 çултан аслăрах ачасем тĕлĕшпе ача сачĕсенчи черетсене пĕтернӗ, 2015 çулта вара мĕн пур ачан шкулчченхи вĕренĕвне тивĕçтерĕпĕр.

Çемьен ачана воспитани парас ĕçри пĕлтерĕшĕ пысăк. Вăл сывă пулни çеç çителĕксĕр, чăн-чăн çын çитĕнтĕр – ку хисепе тивĕç йывăр ĕç. Çавăнпах "Юратупа шанчăклăхшăн" орден туса хунă, унпа мăшăрланса 50 тата ытларах çул пĕрле пурăнакан, çирĕп, сывă, йĕркеллĕ, пĕр-пĕрне юратнипе хисеплени çинче никĕсленнĕ, ачисене – Раççей Федерацийĕн лайăх гражданĕсене – çитĕнтернӗ çемье йĕркеленĕ мăшăрсене наградăлатпăр.

Паян эпир тĕрĕс çул суйласа илнĕ тесе çирĕппĕнех калама пулать. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ республикăра халăх йышĕ хăй тĕллĕн ӳссе пынине палăртатпăр, çемьесенче вăрах кĕтнĕ виççĕмĕш, тăваттăмĕш, пиллĕкмĕш ачасем ытларах çуралаççĕ. Иртнĕ çулталăкра çеç Чăваш Енре нумай ачаллă çемьесен шучĕ 10 процент хушăннă.

Хаклă туссем, пирĕн кăтартусем лайăх, анчах ăнтăлмалăх тĕллевĕмĕрсем пур. Пурне те сывлăх, телей тата ăнăçу сунатăп. Çĕнĕ кашни кун сире илĕртӳллĕ самантсем парнелетĕр, савăнăç, çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм, çитĕнӳ кӳтĕр!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

### ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

Сире Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çемье, атте-анне килĕ кашни çыннăн пурнăçĕнче çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пирĕн пурнăç епле пуласси йăлтах çемьерен пуçланать. Ача çемьере пур енлĕн аталанса, ырăпа усала уйăрма, ырă ĕçсем тума хăнăхса ӳсет. Ытти мĕн пур ырă енсем те йăлтах çемьерен пуçланаççĕ: çемьерех ачасем ĕçлеме, ватăсене хисеплеме, яваплăха туйма, сывă пурнăç йĕркине хăнăхса ӳсеççĕ. Никам ăнланмасан та, никам пулăшмасан та, никам каçармасан та тăван килте, çывăх çынсем сана ăнланаççĕ, пулăшаççĕ, каçараççĕ. Кунта сана яланах кĕтеççĕ, юратаççĕ.

Çемье телейĕ вара пирĕнтен хамăртанах килет. Килте пĕр-пĕрне ăнланма, каçарма пĕлмелле пирĕн. Туслă тата тулли çемьере йывăрлăха чăтса ирттерме, çĕнтерме те çăмăлтарах. Ашшĕ-амăшĕн ăшшине, юратăвне туйса ӳсекен ачасем йывăрлăха та çĕнтерме пултараççĕ, ырă кăмăллă пулаççĕ, пурнăçра хăйсен вырăнне тупаççĕ. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев та хăйĕн Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче аякка ĕçлеме çӳрекен ашшĕсене каялла киле тавăрасси, вĕсене тăван Чăваш Ентех ĕç вырăнĕсем туса парасси çине пысăк тимлĕх уйăрать. Çавăн пекех çемье хаклăхне сыхласа хăварассипе тимлемеллине палăртать, мĕншĕн тесен республика, çĕр-шыв пуласлăхĕ те çемье çирĕплĕхĕпе унта сывă та тĕрĕс йăла-йĕркене тытса пынинчен пуçланать. Чăваш халăхĕн тымарĕн çирĕплĕхĕпе малашнехи аталанăвĕ те çемьеренех килет. Культура çулталăкĕнче çакна уйрăмах асра тытмалла пирĕн. Ачаллă çемьесене пулăшас ыйту çине Раççей, Чăваш Республикин Правительствисем тимлĕ пăхаççĕ. Çемьесене патшалăх енчен пулăшни те çакнах кăтартса парать.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал сунатăп. Эсир ачăрсемшĕн ырă тĕслĕх пуласса та шанатăп. Килĕрте яланах юрату, килĕшӳпе тату пурнăç, телей хуçалантăр. Ачăрсем савăнăç çеç кӳччĕр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.**

Ларуран

## Республика кунĕн ыйтăвĕсемпе

Чăваш Енре пурăнакансем Республика кунне уявлама хатĕрленеççĕ. Вăхăт унччен пĕр уйăх ытларах кăна юлать. Çавна май Республика кунне хатĕрленсе хутшăнассин ыйтăвĕсемпе ĕçлекен районти йĕркелӳ комитечĕн майăн 7-мĕшĕнче иртнĕ ларăвĕнче шăпах ĕнтĕ унччен туса ирттермелли ĕçсем пирки сăмах пычĕ. Ăна комисси председателĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ертсе пычĕ.

Республика кунне уявланă май Шупашкарта "Контур" заводăн выставка комплексĕнче июнĕн 18 – 23-мĕшĕсенче регионсем хушшинчи "Регионсем – килĕштерсе ĕçлессин чикки çук" выставка ĕçлĕ. Кăçал çĕнĕлĕх пур. Муркаш районĕ валли выставкăра унчченхи пек 6 тăваткал метр мар, 12 тăваткал метр лаптăк уйăрса парĕç. Апла пулсан хамăр района тивĕçлипе кăтартма майсем те ытларах пулаççĕ. Кун пирки район администрацийĕн экономика тата агропромышленноç комплексĕн аталанăвĕн пайĕн пуçлăхĕ Нина Костина каласа пачĕ.

Ростислав Николаевич вара выставка материалĕсем хушшинче Муркаш районĕн производствăри, вĕренӳри, культурăри, спортри çитĕнĕвĕсем пирки каласа паракан материалсем, çавăн пекех районта пурнăçа кĕртме хатĕрленекен инвестици проекчĕсем, вăл шутра Катькас ял тăрăхĕн территорийĕнче хута каймалли çĕнĕ микрорайон, Ильинка тăрăхĕнчи этнопарк тата ыттисем тĕп вырăн йышăнмаллине палăртрĕ.

Ыр кăмăллăх марафонĕ

## Хутшăнма тăрăшăр

Чăваш Енре çулсеренех "Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе" ыр кăмăллăх марафонĕ иртет. Марафонăн тĕллевĕ пысăк – ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр, тăлăха юлнă ачасене, сывлăх тĕлĕшĕнчен хевтесĕррисене пулăшма тата сиплеме укçа-тенкĕ пухасси, пултаруллă çамрăксене пулăшасси, ачалăхпа çыхăннă ыр кăмăллăх программисене пурнăça кĕртесси.

Кăçалхи марафон пысăк утăмпа утать – республикăра çак эрне пуçламăшĕ тĕлне пурĕ 7 миллион та 959 пин тенкĕ ытла пухăннă. Муркашсен тӳпи те ӳссех пырать – 155 пин тенкĕ ытла.

Аса илтеретпĕр, çак марафонта пухăнакан укçа-тенкĕ каярах района таврăнать. Ăна хамăр районта йывăр лару-тăрура пурăнакан ачасене пулăшма усă кураççĕ, апла пулсан пирĕн кашнин пурнăçра ырă ĕç тума май пур.

Марафона пурте хутшăнма пултараççĕ. Укçана çак реквизитсемпе куçармалла:

ЧРО ООБФ "Российский детский фонд"
ИНН 2128005408, КПП 213001001
Р/с № 40703810075220160067
в Чувашском ОСБ № 8613 г. Чебоксары
БИК 049706609, к/с 30101810300000000609.

Кăçал марафона хутшăнас текенсем валли тепĕр май та пур: 4647 номер çине "НИМЕ" тесе çырса смс ямалла кăна. Çак хыпар хакĕ 55 тенкĕ те 30 пуспа танлашать. Хыпара пĕр телефонпа темиçе хутченех яма юрать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă та хисеплĕ аннене, хунямана, мамака, кукамая – Çĕньял Хуракасси ялĕнче пурăнакан **Ирина Александровна АВИЛОВĂНА** 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Татах та нумай пурăнма сана çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Тавах сана йывăр самантсенче ăнланнишĕн, пурне те пулăшма хатĕрришĕн. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, Гера, Сашăпа Иулия, Настьăпа Дима, кĕçĕн мăнукĕ Рома, çывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă та хисеплĕ аннене, хунямана, мамака, кукамая, ват кукамая – Патаккасси ялĕнче пурăнакан **Антонина Михайловна ИВАНОВĂНА** 92 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: Мулкачкассинче пурăнакан хĕрĕпе кĕрӳшĕ, вĕсен ачисемпе мăнукĕсем.**

Аслă Çĕнтерӳ уявĕнчен

# Нихăçан та ан пултăрччĕ вăрçă

Майăн 9-мĕшĕнче яланхи йăлапа пур çĕрте те фашистла Германие аркатса Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 69 çул çитнине паллă турĕç. Муркашри митинг "Сывлăх" физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнче иртрĕ. Унта вăрçă ветеранĕсем, вăрçăра вилнисен тăлăх арăмĕсем, тыл ĕçченĕсем, шкул ачисем, ĕç коллективĕсен представителĕсем хутшăнчĕç. Митинга район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев уçрĕ.

– Вăрçă хирĕнче çапăçнă тата Аслă Çĕнтерĕве çывхартма хутшăннă хисеплĕ çыннăмăрсем, эпир сирĕн умăрта пуç таятпăр. Сирĕн тивлетĕрпе халĕ эпир мирлĕ пурăнатпăр. Хăрушă вăрçă тивмен çемье вара çук та пулĕ, кашниех унăн синкерне туйма пултарнă, – терĕ Ростислав Николаевич уява уçнă май.

Районтан вăрçа 9845 çын тухса кайнă. 5491 çын тăван килне каялла таврăнайман, вĕсем пуçĕсене мирлĕ пурнăçшăн хунă. Вăрçа хутшăннисем сахаллансах пыраççĕ. Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнисене те пирĕн яланах асра тытмалла. 69-мĕш Аслă Çĕнтерĕве вара 47 ветеран кăна кĕтсе илме пултарчĕ. Хăйсен кунçулне шеллемен паттăр çынсем яланах пирĕншĕн ырă тĕслĕх пулса юлĕç.

Вăрçа хутшăннисем мĕн пур йывăрлăха чăтса ирттернĕ, фронт çул-йĕрĕ вара вăрăм пулнă. Çав тапхăрта вĕсем мĕн кăна курман пулĕ? Пире, хыççăнхи ăрăва, малалла ĕçлеме майсем туса панă. Ветерансен тăрăшулăхне вара патшалăх пысăка хурса хаклать. Иртнĕ ултă çул хушшинче 244 вăрçă ветеранĕпе вăрçăра вилнĕ салтакăн тăлăх арăмĕ тата вĕсен çемйи хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пултарнă. Халĕ черетре 14 ветеран тăрать, çак кунсенче кăна районти ветерансем валли 5 сертификат çитнĕ.

Аслă ăрăвăн паттăрла ĕçне çамрăксем тăсаççĕ, вĕсем тĕрлĕ çапăçăва хутшăнса хăюлăх кăтартаççĕ. Уйрăмах палăрнисене уявра Афган вăрçин орденĕпе тата медалĕпе чысларĕç.

Районта ырă йăлана кĕнĕ тăрăх çулсеренех Çĕнтерӳ кунне халалласа Муркаш – Васкасси маршрутпа велосипедистсен чупăвне ирттереççĕ. Çамрăксен парламенчĕ пуçарнипе кăçал пĕрремĕш хут Муркаш – Москакасси – Шурча – Муркаш маршрутпа авточупу пулчĕ.

Муркашсене Аслă Çĕнтерĕвĕн 69-мĕш уявĕпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, республика Пуçлăхĕн Администрацийĕ, Чăваш Ен Правительстви ячĕпе гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăрăвăн Чăваш Республикинчи патшалăх комитечĕн председателĕ В. Петров, Чăваш Республикин çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пайĕн пуçлăхĕн çумĕ А. Петров саламларĕç.

Çамрăк армеецсемпе кадетсен парачĕ иртрĕ. Митинг Çĕнтерӳ паркĕнче вилнĕ салтаксене асăнса лартнă палăкпа Мухтав мемориалĕ умне чечек кăшăлĕсем хунипе вĕçленчĕ.

Куракан умне Муркашри тата Орининти ветерансен халăх хорĕсем тухрĕç. Вăрçа хутшăннисем хăйсен çамрăклăхне аса илчĕç, салтак пăтти астиврĕç.

Каçхине уяв программи малалла тăсăлчĕ. "Эпĕ астăватăп! Эпĕ мăнаçланатăп" район шайĕнчи гала-концерт пĕрремĕш хут иртрĕ. Аслă Çĕнтерӳ кунĕ уяв фейерверкĕпе вĕçленчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: уяв саманчĕсем.**









## Паттăрсемпе паллашрăмăр

Аслă Çĕнтерӳ кунĕ умĕн "Солнышко" ача садĕнчи "Почемучки" ушкăна çӳрекен ачасем Муркашри Çĕнтерӳ паркне çитсе килчĕç. Воспитательсемпе пĕрле ачасем палăк умне чĕрĕ чечексем хучĕç, палăк умĕнче мăнаçлансах сăвăсем каларĕç. Воспитательсем Совет Союзĕн Геройĕсен мемориалĕ умĕнче ачасене Геройсем пирки каласа пачĕç. Г. Алексеевпа, Я. Анисимовпа, Б. Васильевпа, А. Воробьевпа, И. Мешаковпа тата Мухтав орденĕсен тулли кавалерĕпе А. Быковпа пирĕн район кăна мар, çĕр-шыв та мухтаннине пĕлтерчĕç воспитательсем. Паттăр ентешсене асăнса шăплăх минучĕ те иртрĕ.

Çак çул çӳрев ачасенче патриот туйăмне вăратма пулăшрĕ тесе шутлатпăр, мĕншĕн тесен ачасем экскурси питĕ килĕшнине пĕлтерчĕç.

**Г. САЗОНОВА, С. ДАШКОВА, воспитательсем.**



Ырă ят

## Пурнăçне çыхăну ĕçне халалланă

Майăн 7-мĕшĕ тĕнче наукипе техникин историне радио çуралнă кун пулса кĕрсе юлнă. Шăпах çав кун 1895 çулта Вырăссен физикăпа хими обществин ларăвĕнче Раççей физикĕ Александр Степанович Попов доклад туса панă тата хăй туса хатĕрленĕ тĕнчери пĕрремĕш радиоприемника ĕçре кăтартнă, радио çыхăнăвĕн пĕрремĕш сеансне ирттернĕ.

Хальхи информаци технологийĕ епле çӳллĕ шая çитнин тĕслĕхĕ вăл ученăйсен, инженерсен, техниксен – хăйсен пурнăçне çыхăну отраслĕпе çăхăнтарнă мĕн пур çыннăн нумай ăрăвĕн ĕçĕн кăтартăвĕ пулса тăрать.

Майăн 7-мĕшĕнче Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви çыхăнăвăн республикăри чи маттур ĕçченĕсене Чăваш наци библиотекине Радио кунне халалланă савăнăçлă уяв мероприятине йыхравланă.

Хăйĕн сăмахĕнче Валентина Андреева министр Чăваш Енри çыхăну тата радио аталанăвĕн тĕп тапхăрĕсене çутатса панă. Çавăн пекех вăл информацин çĕнĕ технологийĕсене, цифра телевиденине тата сотовăй çыхăнăва аталантарассин ыйтăвĕсем çинче чарăннă. Валентина Владимировна республикăри çыхăну отраслĕн хисеплĕ ĕçченĕсене професси уявĕпе саламланă, пархатарлă ĕçшĕн тата çыхăнупа информатизацие аталантарма тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн тав тунă.

Уявăн савăнăçлă мероприятине пирĕн районтан район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пайĕн пуçлăхĕ Валерий Лаврентьев хутшăннă. Валерий Григорьевич профессипе – радиоинженер. Вăл хăйĕн пурнăçне çыхăнупа информатизацие аталантарас ĕçе халалланă. 1980-мĕш çулсенче çыхăну спутникĕсем туса хатĕрлес тата вĕçтерсе ярас ĕçсене хутшăннă. Чылай вăхăт Свердловск хулинчи атом судостроенийĕн центрĕнче вăй хунă. Юлашки 16 çул хушши район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пайне ертсе пырать.

Районти информаципе çыхăну сферине аталантарма тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн Валерий Лаврентьева Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп грамотине парса чысланă.

**В. ЛЕОНИДОВ.**

Саламлатпăр



Эпир хамăрăн хаклăран та хаклă аннене, асаннене, аппана, пирĕн çывăх çыннăмăра – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Зоя Ивановна НИКОЛАЕВĂНА** 65 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр. Эсĕ ĕçрен ютшăнманни, ачусемпе çывăх тăванусене пулăшма ялан хатĕр пулни сана çĕр çине Турă панă çул-йĕр тесе шутлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, утас çулу яланах такăр пултăр, ĕмĕрӳ вăрăм килтĕр.

Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран,
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма вăй-хал парса тăрать.

**Салампа: хĕрĕсем, ывăлĕ, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кинĕ, йăмăкĕсем, тăванĕсем.**



Хаклă, хисеплĕ, юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçине – Пĕрремĕш Май выççăлккинче пурăнакан **Николай Владимирович ЯСТРЕБОВА** 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăхпа вăй-хал, телейпе ăнăçу санпа пĕрле пулччăр. Ырă та уçă кăмăлушăн, пирĕншĕн яланах тăрăшнăшăн тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕ, кинĕсем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Ыран – Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ

# "Ачасем аталанччăр тетпĕр"

Тойкилтĕ ялĕнче пурăнакан Васильевсен çемйине нумай чух районта иртекен спорт ăмăртăвĕсенче курма пулать. Акă нумаях пулмасть Муркаш райпо кубокĕсене çĕнсе илессишĕн иртнĕ çăмăл атлетика эстафетинче те вĕсен çемйи малти вырăн çĕнсе илчĕ, хаклă парнене тивĕçрĕ **(сăн ўкерчĕкре)**.

Светлана Порфирьевнăпа Эдуард Венальевич – питĕ хастар мăшăр. Çемье пуçĕ хуçалăхра, кайран шкулта водительте тимленĕ, мăшăрĕ 20 çул ытла ĕнтĕ Тойкилтĕри шкулта пуçламăш классене вĕрентет. "Ачасем аталанччăр тетпĕр. Çавăнпах пĕр вырăнта ларма юратмастпăр эпир, çемйипех активлă пулма тăрăшатпăр. Тăтăшах спорт ăмăртăвĕсене хутшăнатпăр, хамăр ялта йĕркеленнĕ "Хĕлхем" эстрада ушкăнне юрлама та çўретпĕр", – тет Светлана Порфирьевна.



Çемьере икĕ ача ўсет. Вадим 20 çулта ĕнтĕ. Тойкилтĕри тĕп шкулта 8 класра вĕренекен Виолетта вара Муркашри искусство шкулĕнчи хореографи уйрăмне вĕренсе пĕтерме те ĕлкĕрнĕ. Иккĕшĕ те спортпа туслă. "Малтан эпир ывăлпа та ăмăртусене чылай хутшăннă, пĕр вунă çул каялла районти 27 çемье йышĕнче çĕнтерўçĕ пулса телевизор та çĕнсе илнĕччĕ", – аса илчĕ çемье биографийĕн пĕр самантне Светлана Порфирьевна.

Савăнăçлă та асра юлакан интереслĕ самантсем вара вĕсен туслă çемйинче татах нумай пулччăр.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ўкерчĕкĕ.**

Агробизнес аталанăвĕнче

# Вĕсем – ĕç паттăрĕсем



Ăнăçу никĕсĕ çĕнĕ технологисемпе ĕç йĕркелĕвĕнче пулнине кашниех пĕлетпĕр. Анчах вĕсене алла илесси нумай чухне йывăррăн пулса пырать е теприсен пачах та вырăнтан тапранаймасть. Малашлăха çирĕп пăхакансем вара çĕнĕ технологисемпе çĕнĕлле шухăшлава хăйсен тăрăшулăхĕ çине шанса çул параççĕ. Вĕсен тĕслĕхĕнче эпир паянхи пурнăçăн ырă варкăшне те, Раççей Правительстви çăмăллăхсемпе усă курса малалла ăнтăлма пулăшу алли тăсса панине те куратпăр. Çапла вара çĕнĕлĕхсемпе хĕç-пăшалланса малалла сулмаклă утакансем пур-ха пирĕн хушăмăрта. Вĕсен ĕçĕпе тата мал туртăмлă аталанăвĕпе паллашни ыттисене те çĕнĕлĕхсем тĕлĕшпе хăюллăрах пулма хистессе шанас килет.

Сĕт сăвассине пăхас пулсан, маттуррисен шутĕнче Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативне палăртмалла. Пĕлтĕр кунти фермăра ĕçлекен 9 доярка пĕр ĕне пуçне сĕт сăвассине вăтамран 6 пин килограмм урлă каçарма пултарчĕç: фермипе вăтамран 6124 килограмм. Туслă ĕçлесе Анаткассинчи сĕт фермин коллективĕ иртнĕ çул пĕтĕмпе 1292,2 тонна сĕт туса илме хевте çитерчĕ. Уйрăм ĕçченсен ĕç кăтартăвне илсен ўсĕм картлашки татах та пысăкрах. Тĕслĕхрен, ĕнесене машинăпа сăвакан оператор Надежда Орлова хăйĕн ушкăнĕнчи кашни ĕнерен вăтамран 6478 килограмм сĕт суса "Ĕнесене машинăпа сăвакан 2013 çулхи чи лайăх оператор" çĕнтерўçĕ хăйăва, район администрацийĕпе АПК ĕçченĕсен профсоюз райкомĕн дипломне тата хаклă парнене тивĕçрĕ. Надежда Николаевна çулталăк хушшинче хăй пăхакан ĕнесенчен пĕтĕмпе 124,3 тонна сĕт суса илчĕ. Çак ĕç хуçалăх экономикишĕн мĕнле тĕкĕ пулнине хăвăрах шутласа пăхăр. Кунашкал маттурсем малашне районта ытларах пуласса шанас килет.

Паянхи сăн ўкерчĕкре эсир асăннă хуçалăхăн обществăлла выльăх-чĕрлĕх ферминче ĕçлекенсен пĕр ушкăнне куратăр. Тăван ен аталанăвĕнче вĕсен кашнийĕнех тўпи пысăк.

**А. БЕЛОВ.**

## 16 мая – День малого и среднего предпринимательства

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает, что 16 мая 2014 года в районе проводится День малого и среднего предпринимательства, с участием представителей Министерства экономического развития, промышленности и торговли Чувашской Республики, Республиканского бизнес-инкубатора, компаний, осуществляющих поддержку бизнеса, банков.

Приглашаем Вас принять активное участие в данном мероприятии и оказать посильную финансовую поддержку для организации и проведения данного мероприятия. Сценарный план прилагается.

**Сценарный план проведения Дня малого и среднего предпринимательства в Моргаушском районе Чувашской Республики**

Конференц-зал производственного бизнес-инкубатора с. Моргауши Моргаушского района — 16.05.2014 г. Начало 10.00 час.

| | |
|---|---|
| 10.00-10.05 | **Открытие Дня малого и среднего предпринимательства. Вступительное слово.** Тимофеев Ростислав Николаевич - глава администрации Моргаушского района |
| 10.05-10.15 | **Итоги развития малого и среднего предпринимательства в Моргаушском районе Чувашской Республики за 2013 год.** Костина Нина Марксовна – начальник отдела экономики и развития АПК администрации Моргаушского района |
| 10.15-10.40 | **Формы и методы государственной поддержки малого и среднего предпринимательства в Чувашской Республике** Иванов Евгений Петрович – ведущий специалист-эксперт отдела развития предпринимательства и ремёсел Министерства экономического развития Чувашской Республики |
| 10.40-10.55 | **Направления деятельности Республиканского бизнес-инкубатора** Сергеев Александр Вячеславович – главный консультант отдела экономики и содействия занятости населения Республиканского бизнес-инкубатора Чувашской Республики |
| 10.55–11.05 | **Кредитование малого и среднего бизнеса в АНО «Агентство по поддержке малого бизнеса в Чувашской Республике». Услуги АНО «Гарантийный фонд Чувашской Республики»** Борисов Андрей Николаевич – ведущий финансовый аналитик АНО «Агентство по поддержке малого бизнеса» |
| 11.05-11.15 | **Об услугах ОАО «Лизинговая компания малого бизнеса»** |
| 11.15-11.25 | **Изменения в законодательстве в сфере налогообложения малого и среднего предпринимательства.** |
| 11.25-11.35 | **Изменения в законодательстве о страховых взносах в 2014 году** |
| 11.35-11.45 | **Кредитные продукты для клиентов сегмента «Малый бизнес» в ОАО "Сбербанк России"** |
| 11.45-11.55 | **Кредитование малого и среднего бизнеса в ОАО «Россельхозбанк»** |
| 11.55-12.00 | **Большие возможности для малого бизнеса** Доманина Евгения Анатольевна – главный менеджер отдела кредитования малого бизнеса Чебоксарского филиала ОАО «АкБарс» Банк |
| 12.00-12.10 | **Ответы на вопросы** |

Трактор хуçисене пĕлме

# "Частник" операци пырать

Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çўрекен транспортпа ытти техникăна пăхса тăракан Патшалăх инспекцийĕ çу уйăхĕн 8–25-мĕшĕсенче ятарлă мероприяти – "Частник" профилактика операцийĕ ирттерет.

Çак тапхăрта уйрăм харпăрлăхри тракторсем тĕлĕшпе тимлĕх ўсет. Тĕрĕслевçĕсем трактористсем хăрушсăрлăх правилине епле пăхăннине, усă курма май çук, кивелнĕ техникăна учетран кăларассипе тата туяннă техникăна çĕнĕ хуçисем учета тăратассипе мĕнле ĕçленине, тракторсем техника тĕрĕслевĕ витĕр тухнипе тухманнине, вĕсем ĕçе тухма ирĕк илнине çирĕп пăхĕç.

Тĕрĕслевсем ирттерме ĕç ушкăнĕ йĕркеленĕ.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ.**

Объявления

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:121301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Жирнова Людмила Михайловна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Милюдакасы, ул. Колхозная, д. 1.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:121301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:061901:1 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельных участков, образованных в счет земельных долей. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Васильева Елена Петровна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Б. Татаркасы, ул. Центральная, д. 67.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Карзаковой М.А., номер квалификационного аттестата 21-12-49 от 20.12.2012 г. Почтовый адрес: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25. Электронная почта: ooozemly@rambler.ru.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:061901:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, территория землепользования СХПК «Сундырский», южнее д. Татаркасы.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания земельных участков относительно размера и местоположения границ выделяемого земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25, а также в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: 428000,Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, Московский проспект, д. 37.

**Постановление главы Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики от "12" мая 2014 года № 4**
**О проведении публичных слушаний по проекту муниципального правового акта "Строительство дорожного сервиса стационарного типа"**

В соответствии со ст.28 Федерального Закона РФ от 06.10.2003г. №131-ФЗ "Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации", ст. 14 Устава Юнгинского сельского поселения Моргаушского района п о с т а н о в л я ю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта "Об изменении разрешенного использования земельного участка" "11" июня 2014 года в 18 часов 00 минут в Сярмыськасинском сельском клубе по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Сярмыськасы, улица Эхменя, дом 13, (проект прилагается).

2. Настоящее постановление подлежит опубликованию в районной газете "Çĕнтерў ялавĕ".

**Глава Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики В.В. ФОМИН.**

**Проект муниципального правового акта Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года № 137-ФЗ "О введении в действие Земельного Кодекса Российской Федерации", с учетом результатов публичных слушаний администрация Моргаушского района Чувашской Республики постановляет:

разместить на земельном участке с кадастровым номером 21:17:080901:1360 объекты дорожного сервиса стационарного типа, включающих: мини-рынок для реализации сельхозпродукции, включающий площадку для сельхозтехники и машин, кемпинги, АЗС контейнерного типа.

С предложениями по проекту муниципального правового акта "Строительство дорожного сервиса стационарного типа" обращаться в администрацию Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00, кроме выходных дней. Последний день приема предложений "11" июня 2014 года до 18-00 часов.

# Пĕлтерӳсем. Объявления

**имидж оптика** сеть оптических салонов Чебоксары

Уважаемые жители с. Моргауши и Моргаушского района

**ПРИГЛАШАЕМ БЕСПЛАТНО ПРОВЕРИТЬ ЗРЕНИЕ И ЗАКАЗАТЬ ОЧКИ**

**21 и 22 мая**

**с 10.00 до 16.00** 1-2.

в **ФСК “Сывлăх”**

по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, 8

**Телефон для справок: 8 961 344 41 44**

Лицензия №ФС-99-03-002797 от 11.04.12г. выдана Федеральной службой по надзору в сфере здравоохранения и социального развития

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, ДВЕРИ СТАЛЬНЫЕ.** Низкие цены. Замер. Доставка – бесплатно. Без выходных. Тел.: 8-937-010-10-54. 2-10.




Организация реализует: песок речной, гравмассу (ОПГС), щебень различных фракций. Без посредников. Низкие цены. Шешкарская пристань, Моргаушский район.
Тел.: 8-927-995-07-51, 8-937-384-06-50. 8-19.

кредитный потребительский кооператив граждан «КапитаЛ»

**КапитаЛ** www.kapital-21.ru

**Поможем и приумножим!**

**Выгодный вид сбережений** от 50 000 до 700 000 руб., от 6 месяцев до 3 лет* **29%**

**ПРИНИМАЕМ СБЕРЕЖЕНИЯ**

**ВЫДАЕМ ЗАЙМЫ ОТ 2,2%****

Личные сбережения застрахованы ЗАО АСК «Инвестстрах»

Процентная ставка по сбережениям от 6 % до 33 % годовых в зависимости от срока договора. Срок заключения договора от 1 до 36 месяцев. Выплата % производится ежемесячно либо по окончании срока действия договора с капитализацией. Услугами могут воспользоваться только пайщики кооператива. Для вступления в КПКГ "КапитаЛ" необходимо оплатить вступительный взнос - 50 руб., обязательный взнос - 200 руб. (при выходе из кооператива паевой взнос в размере 200 руб. возвращается). * Данный вид сбережений доступен каждому члену КПКГ "КапитаЛ". При досрочном расторжении договора процентная ставка рассчитывается по программе "До востребования", 6% годовых. **Указана минимальная ставка по займам, в зависимости от программы.

с. Моргауши, ул. Мира, 5а тел.: 8(83541)62-6-50. 1-2.

КПКГ «КапитаЛ» является членом некоммерческого партнерства «Саморегулируемая организация кредитных потребительских кооперативов «Союзмикрофинанс»

ОГРН 1132130001222 КПКГ «КапитаЛ» только для членов кооператива, подробности по телефонам.

Продаю участок для садоводства на берегу р. Волга. Цена – 370 000 р. Тел.: 8-962-321-23-77.

* * *

ОАО «Чувашагрокомплект» предлагает к поставке зерноуборочные комбайны АГРОМАШ по уникальной цене от 2,68 млн. руб. Гарантия 2 года!
Т/ф.: (8352)63-28-73, моб. 8-967-474-86-74. 2-2.

* * *

Продаю коз с козлятами. Тел.: 8-960-313-72-24. 1-2.

* * *

Продаю Газель-фермер 2008 года выпуска, тент, цвет белый. Вложений не требует. Цена договорная.
Тел.: 8-927-666-32-56.

* * *

Продаю ВАЗ-2114 2011 года выпуска, цвет «белое облако». В хорошем состоянии, не битый, один хозяин. Тел.: 8-937-398-58-56.

* * *

Июнь уйăхĕнче пăранламалли зааненски ăратлă качакасем сутатăп. Тел.: 8-960-305-52-19.

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ. АКЦИЯ!!! Снижение цен! ТРИКОЛОР, НТВ+, ТЕЛЕКАРТА от 3000 руб. Эфирные цифровые приемники от 1200 руб. Обмен старых ресиверов на новые! Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.** 10-10.

ПРОДАЮ ГРАВМАССУ, ПЕСОК, КЕРАМЗИТ, БЛОКИ, КИРПИЧ. Тел.: 8-905-199-69-33. 5-27.

ПРОДАЮ ПЧЕЛОСЕМЬИ, ПЧЕЛОПАКЕТЫ И МЕД. Тел.: 8-908-309-66-75. 1-10.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 10-10.

**ДЛЯ РУКОВОДИТЕЛЕЙ ОРГАНИЗАЦИЙ И ИНДИВИДУАЛЬНЫХ ПРЕДПРИНИМАТЕЛЕЙ!**

**ПРОВЕРКА КОНТРОЛИРУЮЩИХ ОРГАНОВ: ЧТО НАДО ЗНАТЬ, ЧТОБЫ ИЗБЕЖАТЬ НЕОБОСНОВАННЫХ САНКЦИЙ**

К Вам пришли с проверкой должностные лица органов государственного и муниципального контроля? Во избежание необоснованных санкций, важно знать следующие особенности проведения указанных проверок:

1. Информация о всех плановых проверках содержится на сайте Генеральной прокуратуры РФ(www.genproc.gov.ru). В отдельных, оговоренных в законе случаях, проверки могут проводиться без предупреждения, например, органами прокуратуры при возможности причинения вреда жизни и здоровью, налоговой службой, при проверках учета выручки денежных средств в организациях и у индивидуальных предпринимателей.

2. В любом случае перед началом проверки проверяющие обязаны предъявить решение (приказ) о проведении проверки и документы, подтверждающие полномочия проверяющего. В решении (приказе) должны быть указаны цели, задачи, предмет проверки и срок ее проведения.

3. За пределы, обозначенные в решении (приказе) о проведении проверки, проверяющие выйти не могут.

4. Ознакомление проверяющих с подлинниками документов допускается только на территории Вашего объекта, за исключением проведения проверки по месту нахождения проверяющего органа и выемки документов.

5. При несогласии с актом проверки Вы вправе отразить это в акте проверки и отказаться от письменных объяснений (в соответствии со ст. 51 Конституции РФ вы имеете право не свидетельствовать против себя самого и близких родственников).

Если имеются риски наложения необоснованных санкций, Вы можете обратиться к нам в Консалтинговую компанию "Виктория" по адресам: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119; г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4А, единый тел.: 212-377.

**Утепляем дома эковатой: натуральным материалом на основе целлюлозы**

1-5.

- чердаки и полы
- стены и скатные крыши

ЭКОВАТА

8 919 669-16-66
8 987 129-03-67




**ТЕПЛИЦЫ** от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т.д. Телефоны: 8-917-651-00-76, 8-927-858-28-79.

8-10. компания **немецкие ОКНА И ДВЕРИ**

• замер • доставка (бесплатно) • установка под ключ

8(927)844-78-11

всего от 2900 руб. кв.м.

## Прогноз погоды

| | среда 14 мая | | | | четверг 15 мая | | | | пятница 16 мая | | | | суббота 17 мая | | | | воскресенье 18 мая | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +17 | +19 | +20 | +16 | +13 | +18 | +21 | +15 | +12 | +18 | +21 | +13 | +8 | +12 | +18 | +13 | +10 | +15 | +20 | +14 |
| Давление мм | 746 | 747 | 748 | 749 | 751 | 752 | 753 | 753 | 753 | 754 | 754 | 756 | 756 | 757 | 755 | 755 | 754 | 756 | 756 | 757 |
| Влажность % | 74 | 79 | 66 | 71 | 78 | 54 | 37 | 65 | 74 | 53 | 36 | 46 | 56 | 45 | 38 | 62 | 74 | 50 | 33 | 49 |
| Ветер м/с | 2 | 1 | 5 | 3 | 2 | 2 | 4 | 3 | 3 | 2 | 5 | 7 | 6 | 5 | 3 | 5 | 5 | 5 | 4 | 3 |
| | Ю-З | З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-В | С-В | С-В | С | С-В | С-В | В | В | С-В | С-В | С-В | В | В |
| Солнце восход / заход | | 04:40 | 20:57 | | | 04:39 | 20:59 | | | 04:37 | 21:01 | | | 04:35 | 21:03 | | | 04:33 | 21:04 | |
| Луна восход / заход | | 20:28 | 04:40 | | | 21:41 | 05:16 | | | 22:46 | 06:01 | | | 23:41 | 06:58 | | | - | 08:05 | |

## Администрация Моргаушского района сообщает о наличии земельных участков

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории "земли сельскохозяйственного назначения" с кадастровым номером 21:17:160201:405, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, общей площадью 606 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ "МФЦ", с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:270901:151, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:270901, для ведения личного подсобного хозяйства, общей площадью 6000 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1302, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, общей площадью 6000 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:120201:179, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, общей площадью 500 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

**ТРЕБУЕТСЯ ПРОДАВЕЦ. Тел.: 8-927-666-93-93.**

Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 4-10.

Продаем керамзитобетонные блоки высокого качества, цемент, песок, гравмассу.
Тел.: 8-960-307-41-78. 4-10.

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 28-68.

ЗАО «Чебоксарское предприятие «Сеспель» приглашает на работу электрогазосварщиков. Обращаться по телефонам: 8-937-371-84-07 или 8-960-302-15-07. 7-10.

* * *

Ĕне, вăкăр, тына, пăрусем туянатпăр.
Тел.: 8-987-665-02-13. 10-10.

* * *

СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 10-10.

* * *

Хорнуй ялĕнче пурăнмалли çурт ытти хуралтăсемпе пĕрле сутатăп. Тел.: 8-927-865-07-00. 2-2.

* * *

Ĕне, вăкăр, тына, сурăх туянатăп.
Тел.: 8-905-341-69-25. 3-3.

* * *

Кольца колодцев ж/б (замковые, простые) D-0.7:1.0:1.5, крышки, днища. Бурение индивидуальных колодцев и скважин. Доставка. Тел.: 8-902-327-82-52. 8-21.

* * *

2 уйăхри ăратлă качака путеккисем сутатăп.
Тел.: 8-965-88-44-293.

* * *

Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-967-474-85-06.

* * *

Продаю песок, щебень, гравмассу, бой кирпича и т. д. Доставка из с. Моргауши. Недорого.
Тел.: 8-905-345-96-62. 1-2.

* * *

Принимаем картофель продовольственный в любом количестве на территории «Сельхозтехники» в с. Моргауши. Без выходных. С 9-00 ч. до 18-00 ч.
Тел.: 8-965-688-63-06.

* * *

Требуется пастух для выгула овец, зарплата 15000 руб. в месяц. Питанием и проживанием обеспечивается. Тел.: 8-965-683-61-71.

* * *

В свиноферму ООО «Бездна» в д. Рыкакасы требуются рабочие, ветеринар. Прием по трудовой книжке, з/п достойная. Тел.: 8-906-388-66-04. 1-2.

* * *

Июнь, декабрь уйăхĕсенче иккĕмĕш пăруламалли икĕ ĕне тата сентябрь уйăхĕнче пăруламалли тынашки сутатпăр. Тел.: 8-967-473-72-04, 8-987-676-66-20.

* * *

Продаю автомашину ВАЗ-21140 2006 года выпуска, цвет темно-зеленый. Цена договорная.
Тел.: 8-937-370-98-79.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федералллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 13.05.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 5134.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.